# АБУЛЬКАСИМ ЛАХУТИ

*Таджикистан*

## ВИÇĔ ТУМЛАМ

Максим Горькие

Ман асăмран каймарĕ пĕр юмах,
Ăна илтсеттĕм эпĕ тахçанах...
Тĕл пулнă тĕрлĕ тĕслĕ виç тумлам,
Пĕр пĕринпе калаçнă çаплалла.
Пĕри каланă:—Çутă эп ялан,
Никам та танлашаймĕ манпалан.
Эп витĕр курăнап, тĕс çук та ман,—
Çапах чи хўхĕм çăлтăрпа эп тан.
Мĕн тунă çын çак аслă тĕнчере,
Мĕн тăвĕ малашне вăл—ĕмĕрех
Эп йăлтăртатнипе пулса пырать,
Манпа этемлĕх тытăнса тăрать.
Чи хаклă чулсенчен эп кая мар,
Эп—ĕççынни юхтарнă ырă тар;

Ун çамкинчен тумлап халичченех
Илемлетесшĕн пĕтĕм тĕнчене.

Тепри, хĕрли, каланă ак çапла:
—Тавлашмăп, килĕшетĕп санпала.
Анчах эп хам та тивĕçлĕ тава,
Санпа танах эп тухнă мухтава.
Рубин ман тĕслĕ хĕрлĕ пулнăран
Çав тер хакла тăмасть-и-ха вара?
Питçăмарти хĕрли вăл сывлăха,
Çĕнтерĕве те пĕлтермест-ши-ха?
Хĕвел тухуçăн хĕрлĕ тĕспелен
Тĕнче хитреленмест-и ĕмĕртен?
Садра йăм хĕрлĕ роза умĕнче
Илемсĕр курăнать ытти чечек.
Эп — пусмăр тĕнчине, пур усала
Вутпа çунтаракан вĕри тумлам.
Сана эп кăларасшăн ирĕке
Вăрçа сиксе кĕретĕп, хум пекех.
Канмасăр ĕçлекенсене ялан
Харампырсем хĕстернине курсан,
Чарусăр çиллĕмпе эп вĕчĕхсе,
Хам çулăмпа çын чĕрине хĕртсе,
Чĕнетĕп тăшмана çапса ватма,
Ертсе тухатăп аслă ĕç тума.
Эп пулмасассăн — ĕмĕр, яланах
Чуниллисем асаплĕччĕç сана,

Эс паранаттан хаван шапуна,
Эс пулаттан чура, чура кана!
Эп вёресен — пур пусмарлах пётет,
Тӳнсе каять патша престолĕ те.
Эп — çулам, эп — булат, эп — вут хĕвел,
Эп — юн, хальччен пулман кĕрешĕве —
Пур пусмар тĕнчине йалт аркатма,
Рабочисене власть илсе пама
Кĕрешĕве çĕкленнĕ салтаксен
Хĕп-хĕрлĕ юнĕ эп, пĕлес тесен.

Çав ик тумлам пупленине илтсен,
Вĕсен самахĕ тĕрĕсне пĕлсен,
Калана виççĕмĕш - хура тумлам:
— Чанне каларар, епле-ха тунам?
Анчах хисепĕм пур ман хаман та,
Хĕрӳлĕх те сирĕннипе пĕр тан.
Хура тесе ан тиркĕр-ха мана:
Хурин сиенĕ çук пахакана.
Хура сан айĕнче никам курман
Вĕçĕ-хĕррисĕр варттанлах пур ман.
Манран та çивĕч хурçа — çук ку чух,
Манран та хаварт çиçĕм — курас çук.
Восстани ĕçĕ хай вĕçне тухсан,
Салтаксене кантармалла пулсан,
Чи татакла варçа кĕрсе варçма
Хаватла вай пуçтараннă самант —

Çаплах эп пăрахмастăп кĕрешме,
Чикместĕп хĕрхенӳсĕр хĕçĕме:
Ман хĕç — перо, ман вăрçă хирĕ — хут,
Сăмахăмпа эп хыптарасшăн вут.
Ĕçхалăхĕ çĕнтертĕрччĕ тесе.
Эс, тар тумламĕ, чунупа хĕрсе,
Чăнне каларăн пĕтĕмпех пире,
Сан сăмаху вăл ĕнчĕпе пĕрех.
Итле-ха тăванун чăн сăмахне,
Хура тумлам мĕскер каланине.
Пур пусмăрлă çĕрте, йĕри-тавра,
Ĕççыннисем ӳкеççĕ чăм тара;
Тумтирсĕр, выçă — сахал мар вĕсем —
Харампырсемшĕн лăш курманнисем.
Анчах эп тăшмана питлемесен,
Пур туссене эп уççăн чĕнмесен,
Мĕн курнине çыра-çыра пырса,
Хăватлă сăмахпа кăтартмасан,—
Ĕçхалăхĕ юхтарнă тар йăлтах
Сая кайса çухалĕ кăлăхах.
Эс те, хĕрлĕ тумлам, чăнне калан!
Тавлашаймастăп эпĕ санпалан.
Курап эс революци тĕслине,
Шанатăп сан чĕлхӳ суйманнине.
Сана тĕлĕнтерейĕмĕп мухтаса,—

Кĕрешӳре тăкăннă юн — таса.
Анчах, çĕнтерекен кăварлă чун,
Итле ман сăмаха та эсĕ, юн!
Ан тив, хресченсемпе рабочисем,
Тирансене хаяррăн çиленсе,
Çĕкленнĕ пултăр хирĕç вĕсене,
Юхтарнă пултăр тап-таса юнне,—
Анчах та эпĕ, чикĕ палăртса,
Ун патнелле чăн çул кăтартмасан,
Чуна çĕклен хыпарсене эпех
Сарман пулсассăн пĕтĕм тĕнчипех,
Эп çын хастарлăхне ӳстермесен,—
Хĕн пулĕ юлашки вăрçи вĕсен.
Эс, юн, çын шăнăрне тулса çӳрен,
Эп унăн шухăшне пур çĕçĕрен
Çивĕчĕрех тăватăп, эп кăна
Пусмăрлăха ватма чĕнеп ăна.
Мĕнле вăрçса мĕнле çĕнмеллине
Эп вĕрентетĕп аслă ĕç çарне.
Суда та эп парап, судьи те хам,
Эп — адвокат, эпех — айăплакан.
Эп — çилĕ те, çар музыки те эп,
Эп ирĕклĕхшĕн çапăçма чĕнеп.
Чернил тесе чĕнет мана этем,
Эп — сирĕн хӳтлĕхĕр, тар-юн туссем!

Пĕрле вăрçатпăр ташмансемпеле,
Коммуна Керменне тăвар пĕрле.
Хăватлă, арканми туслăхпалан
Ялан эпир çĕнтерĕпĕр, ялан!

1932